ДОКУМЕНТ ПОДПИСАН

УСИЛЕННОЙ КВАЛИФИКАЦИОННОЙ

ЭЛЕКТРОННОЙ ПОДПИСЬЮ

Сертификат выдан: Казначейством России

# ПĔТĔМЛЕТӲ ТĔРĔСЛЕВ ĔÇĔСЕМ
**10-мĕш класс**

***1. Чăвашла тата вырăсла терминсен тӳр килĕвĕсене тупăр.***

| | |
|---|---|
| 1) Халал | а) Народная песня |
| 2) Халăх юрри | ă) Духовное завещание |
| 3) Пуплев характеристики | б) Басня |
| 4) Уйланăш | в) Драма |
| 5) Танлаштару | г) Речевая характеристика |
| 6) Выляну | д) Баллада |
| 7) Юптару | е) Сравнение |

***2. Тĕслĕхсенчи хайлавсенчен хăшне Çеçпĕл Мишши çырман?***

а) «Чăваш ачине»
ă) «Арçури»
б) «Хурçă шанчăк»
в) «Тинĕсе»

***3. Спиридон Михайловăн «Чее кушак» хайлав жанрне палăртăр.***

а) калав
ă) роман
б) выляну
в) сăвă

***4. Хайлавсен авторĕсене палăртăр.***

| | |
|---|---|
| 1. «Чее кушак» калав | а) Федор Павлов |
| 2. «Судра» комеди | ă)Спиридон Михайлов |
| 3. «Пирĕн пурнăç хăтлăхра» («Айтар»)драма | б) Митта Ваçлейĕ |
| 4. «Пит маттур-çке Иванов бульварĕ» сăвă | в)Петр Осипов |
| 5. «Тухмассерен укăлчаран» сăвă | г)Алексей Воробьев |

***5.Панă сăмахсен кирлĕ вариантне суйласа илĕр те клоуз-теста пурнăçлăр.***

Пушово ялĕнче (а)___________нимĕçсем пулнă. Паян вăл пирĕн(ă)__________куçрĕ. Мĕнле каламалла: халĕ ĕнтĕ вăл(б)________ мар, ялăн вырăнĕ çеç тăрса юлнă.

Çурт-йĕрĕ(в) __________ , кăмака мăрийсем çеç вăрăммăн курăнса лараççĕ ,çунса пĕтеймен(г)___________тĕтĕм кăларса выртаççĕ. Кашни колхозникăн пан улми сачĕ пулнă, вĕсем те çунса пĕтнĕ. Ялта пĕр выльăх-чĕрлĕх чĕрни те юлман, пурне те нимĕç оккупанчĕсем пуçтарса хуса кайнă.

Çынсем(д) ________. Ăçта саланса пĕтнĕ-ши вĕсем. Тен, çынсене те нимĕçсем хăйсемпе пĕрлеилсе кайнă-ши? Тен, вĕлерсе пĕтернĕ? Апла пулсан, виллисем курăнĕччĕç.

Пăхатпăр , çунса пĕтеймен (е)__________хушшинчен пĕр хĕрарăм пусне çĕклесе пăхрĕ.. – Вырăссем - им эсир? -тесе хурлăхлă сасăпа ыйтрĕ вăл пирĕнтенЭпир(ĕ)_________курсан ун патне пытăмăр. . Унăн пичĕ-куçĕ чĕп-чĕрĕ юн, çийĕнчи кĕпи çуркаланса пĕтнĕ.( Максим Данилов-Чалтун «Лизавета Егоровна « калав.)

*Суйламалли вариантсем:*

а) паян, ĕнер, ыран
ă)çынна, юлташа, алла, халăха
б) халăх, кӳршĕ, ял
в) кĕлленĕ, çунса пĕтнĕ,юхăнса кайнă
г) тункатасем,ялсем, пĕренесем
д) пуçтаранаççĕ, курăнаççĕ, куранмаççĕ
е) ял, пӳртсем, пĕренесем
ĕ) ваттисене, ачасене, хĕрарăма

**Тĕрĕслев ĕçĕ**
**11-мĕш класс**

***1. Чăвашла тата вырăсла терминсен тӳр килĕвĕсене тупăр.***

| | |
|---|---|
| 1) Халал | а) Народная песня |
| 2) Халăх юрри | ă) Духовное завещание |
| 3) Пуплев характеристики | б) Басня |
| 4) Уйланăш | в) Драма |
| 5) Танлаштару | г) Речевая характеристика |
| 6) Выляну | д) Баллада |
| 7) Юптару | е) Сравнение |

***2. Тĕслĕхсенчи хайлавсенчен хăшне Яков Ухсай çырман?***
а) «Кĕлпук мучи»
ă) «Арçури»
б) «Юратрăм эп, хирсем, сире…»
в) «Шурă хурăнпа калаçни»

***3. Илпек Микулай çырнă «Хура çăкăр» хайлав жанрне палăртăр.***
а) калав
ă) роман
б) выляну
в) сăвă

***4. Хайлавсен авторĕсене палăртăр.***

| | |
|---|---|
| 1. «Таната» роман | а) Александр Артемьев |
| 2. «Салампи» повесть | ă) Николай Терентьев |
| 3. «Пушар лаши» трагикомеди | б) Хветĕр Уяр |
| 4. «Пит маттур-çке Иванов бульварĕ» сăвă | в) Александр Алка |
| 5. «Шыв арманĕ» халап | г) Митта Ваçлейĕ |

***5.Панă сăмахсен кирлĕ вариантне суйласа илĕр те клоуз-теста пурнăçлăр.***

Çинçе уявĕ çу кунĕнчи чи (а)___________вăхăтра килет. Çĕр-шыв пĕтĕмпех ешерсе чечекленнĕ чух, пахчара (ă)__________ тĕвĕленнĕ кунсенче, вăрманта çырла чечекре чухне чăваш Çинçе тума тытăнать. Утă çулма тухман-ха, хирти ĕç пуçланиччен (б)________ килте канать.

Çинçе вăхăтĕнче (в) __________ кун хушши чăваш çыннине урлă выртана тăрăх çавăрма юрамасть, мĕн юрани те — ирхине кĕтӳ хăваласси, каçхине, кĕтӳ кĕртсе, ĕне сăвасси. Кăмака хутса çăкăр пĕçермелле пулсан, (г)___________ варринче ĕçлемелле. Кĕпе-йĕм çума, пир çапма, курăк çулма юрамасть. Кам та пулин çак йĕркене пăсать пулсан айăплине тупса ăса кĕртеççĕ.

Çан-çурăма (д) ________ ан çулăхтăр тесен çынсен Çинçе çитиччен çичĕ хут шыва кĕрсе тухма ĕлкĕрмелле. Çав йĕрке ачасемшĕн кăна мар, пысăккисене те тивет. Çинçе пуриншĕн те (е)__________. Çав виçĕ куна ял халăхĕ урамра ирттерет, хĕвел анса тĕттĕм пулсан тин çынсем пӳрте кĕреççĕ; алăк урлă каçайман ваттисемпе сăпка ачисем çеç пӳртре юлма пултараççĕ. Тухма пултаракансенчен вара пĕри-пĕри мĕншĕн те пулин тухмасан, ăна килĕнчен çавăтса тухаççĕ. (ĕ)_________ Çинçене хисеплеме хушаççĕ, хисеплемесен, тырра шăрăх ĕнтет имĕш, ытти кĕтмен инкек-синкек те çулăхма пултарать теççĕ.

*Суйламалли вариантсем:*
а) лайăх, çумăрлă, пылчăк
ă) чие, пан улми, çĕмĕрт
б) халăх, кӳршĕ, тракторист
в) тăватă, çичĕ, виçĕ
г) ирех, çĕр, кăнтăрла
д) чир-чĕр, хурт, çĕлен
е) пĕремĕк, уяв, ăмăрту
ĕ) ваттисем, ачасем, пуçлăхсем